А. МЕДВЕДЕВ



# ЮЛТАШ ЙӖРӖПЕ

ЧАССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
Шупашкар ◆ 1941

АЛЕКСЕЙ МЕДВЕДЕВ

ОБЯЗАТ...ЬНЫЙ Э...ПЛЯР
ДОСТ...
10 — IX — 1941 г.
№ 175

# ЮЛТАШ ЙӖРӖПЕ

*КАЛАВСЕМ*

ОБЯЗАТЕЛЬНЫЙ
КОНТРОЛЬНЫЙ
ЭКЗЕМПЛЯР

ЧАССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
ШУПАШКАР ◆ 1941

## ТУПМАЛЛИ

Стр.

Юлташ йӗрӗпе . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 3
Унӑн тусӗ . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 16
Художник Ятман . . . . . . . . . . . . . . . . . . 23

Редактор Ф. Е. Уяр.

Подписано к печати 25/VII—1941 г.
НТ5071. Печ. л. 1,62. Печатных знаков
в 1 п. л. 39360.
Тираж 3000 экз.
Заказ № 1949.

Типография № 2 Управления Издательств
и Полиграфии при СНК ЧАССР,
г. Алатырь.

## Юлташ йӗрӗпе

Вăтăр çулсене сулăннă вăтам пӳ-силлӗ, якалса хуралаpах панă шинель тăхăннă Карачăм уй урлă тарăн юра ашса, паспа тытăннă вăрман хӗрне çитсе чарăнчӗ. Вăл йывăррăн сывласа илчӗ те, хура сурăх тирӗнчен çӗленӗ çӗлӗкӗн хăлхисене усса ячӗ. Унтан лапчăкрах пӗчӗк сăмсине лапрашки пирӗпе туртнă алшышӗпе сăтăркаласа илчӗ. Вара тин вăл пуçне çӳлелле йăтса, тавраналла тинкерчӗ. Чăлт шурă юрпа витӗннӗ уй-хирӗн инçетӗнче шупкарах сарă хӗвел йăлтăртатать. Вăл тавракурăм хӗрринчен кăшт çеç йăтăннă. Юр пӗрчийӗсем, куçкӗскин вӗтӗ-вӗтӗ катăкӗсене сапаласа ывăтнă пек, кӗренӗн те янкăр çуттăн ялкăшса çунаççӗ. Карачăм çуралса ӳснӗ Кушлавăш ялӗнчен кăнтăралла тăсăлакан çулпала пӗчӗкçӗн курăнакан çунасем шăвăнаççӗ. Йăмраллă Кушлавăш та шап-шурă тумпа тумланнă. Вăл катаран вăрман пекех курăнать. Ял çийӗнче унта та кунта шупкарах тӗтӗм юписем çӗкленнӗ.

Çак сăнсем Карачăм ăшĕнче темле çĕнĕ туйăмсем, çĕнĕ шухăшсем çуратрĕç. Акă унăн умĕнче çуралса ÿснĕ çĕршыв. Мĕн пек çывăх вăл Карачăмшăн. Мĕн пек хаклă халь уншăн!

Карачăм шăннă аллисене çапа-çапа илчĕ. Унтан ларса канас шутпа хăй умĕнче ларакан шĕшкĕ тунине авма пуçларĕ. Шĕшке карса илнĕ йĕплĕ-йĕплĕ шурă пас шĕлтĕртетсе çĕре тăкăнчĕ. Кăшт авсанах, хуçăлнă сасă илтĕнчĕ. Карачăма çак хуçăлакан шĕшкĕ темшĕн шеллĕ пек туйăнчĕ. Вара вăл ăна текех авмарĕ, аллинчен вĕçертсе ячĕ. Шĕшкĕ, сулланкаласа илсе, малтанхи вырăнне тăчĕ.

Хăй çине хăй кÿренчĕ Карачăм, хăйне хăй ятласа та илчĕ. Вара вăл, пĕр-пĕр тунката тĕл пулмĕ-ши тесе, вăрман хĕррипе утрĕ. Анчах ун çулĕ çинче тункзта таврашĕ курăнмарĕ...

Мĕншĕн Карачăм çак вăрмана юратса пăрахрĕ? Мĕн шырать вăл çак вăрманта? Вăрман—вăрманах. Унта, пур вăрманти пекех, шĕшкĕсем, юмансем, çăкасем тата тĕрлĕрен йывăççем те пур. Çапах та мĕскер илĕртсе пăрахрĕ-ха Карачăма? Мĕн ĕçпе чарăнса тăчĕ вăл çакăнта, çак сивĕ ирхине? Ăçта-ши, мĕскерте-ши вăрманăн туртакан хăвачĕ?

Тăвата çул çурă ĕлĕкрех те çак вăрман хăй вырăнĕнчех ларнă. Карачăм лайăхах астăвать:

ун чухне çулла пулнă. Вăл хăйĕн ватă аппĕпе çак таврари уй-хирте ял кĕтӳне кĕтсе çӳренĕ. Пĕр ăшă та тӳлек кунхине, яланхи пекех, Карачăмпа аппĕ çак вăрмантан тухакан çырмана, кӳлĕ хĕррине, кĕтӳ хуса аннă. Енесем кӳлле кĕрсе кайнă та, хăйсем çиййĕнче вĕçсе çӳрекен аптăратмăш пăвансене хӳрисемпе çапса, пуçĕсене силле-силле тăнă. Сурăхсем итем пек такăрлатнă çерем çинче хашкаса выртнă. Сыснасем лачакара мĕшĕлтетсе чакаланнă.

Карачăмăн ватă аппĕ, çырман леш енне каçса, кăнтăр апатне ларнă. Анчах темшĕн çав, ăна Карачăм халь те лăп тĕрĕссĕн татса калаймасть, унăн çавăн чухне çиес килмен. Вăл, вăтам та кĕре кĕлеткеллĕ, лапрашки пирĕнчен пĕветсе тунă çи-пуç тăхăннă çамрăк, вăрăм пушине кустăрмач туса пуçтарнă та, вăрман хĕррипе пĕр тĕлсĕр утнă.

Карачăм халь те çак вăрман хĕррипе тарăн юра ашса утрĕ. Вăл часах вăрман сăмсакне çитсе чарăнса тăчĕ.

Тăватă çул çурă ĕлĕкрех те Карачăм çак сăмсакра чарăнса тăнă. Кустăрмачласа пуçтарнă пушине шĕшкĕрен çакса янă, хăй кĕççе пек тĕшĕрĕлсе ларакан курăк çине тăсăлса выртнă. Унтан месерле çаврăннă та тĕпсĕр кăвак тӳпене тинкернĕ. Ăна вăл халь те лайăххах астăвать: тӳпере шупка та кăтра

пĕлĕтсем карталанса иртнĕ. Кассăн-кассăн чуна уçăлтаракан сулхăн çил вĕрнĕ. Вăрманти кайăксем юрă шăрантарнă.

Хурăн çырлисен тата капăр чечексен тутлă шăрши сăмсана кĕрсе кăтăклантарнă. Пĕтĕм тĕнче этеме тулли пурнăç, хаваслăх, юрату, телей сĕннĕн туйăннă. Карачăма çакна кура пит те йывăр пулнă. Унăн ни пурлăхĕ, ни сийĕ-пуçĕ, ни юратнă хĕрĕ пулман. Çав хуйхă ĕнтĕ Карачăма арман чулĕн йывăрлăхĕпе пусса тăнă.

Йывăр кăмăлпа выртнă Карачăм. Йĕри-тавра тĕрлĕрен курăксем шурă, сарă, кăвак, хĕрлĕ, хăмăр чечеклĕ пуçĕсене усса ларнă. Вĕсем çăра симĕс курăк хушшинче ытла та илемлĕн курăннă. Карачăм ура çине тăнă та икĕ пысăк ывçă чечек пухнă. Унтан каллех хулăм симĕс курăк çине ларнă та пуç кăшăлĕ тума тытăннă. Çавăнтах Карачăм пуçне канлĕх паман шухăш пырса кĕнĕ. „Анчах ку чечек кăшăла кама тăхăнтартăп-ши?“—тенĕ вăл.

Ун пуçĕнчен мĕн ачаранпах кӳршĕри Крышкан çырла пек сăн-пуçлă, çинçешкерех те тăпăл-тăпăл кĕлеткеллĕ хитре Анфис тухма пĕлмен. Вăл яланах Анфис çинчен шутланă. Шутланă та хăй шухăшĕнчен хăй хăраса ӳкнĕ. Çавах та канлĕх паман кăмăл каллех Анфис çинчен шухăшлаттарнă. Ун чухне те Карачăмăн хитре чечек кăшăла Анфисăн

илемлĕ пуçĕ çине тăхăнтартасси килнĕ. Унăн тĕлĕнмелле илемлĕхĕпе савăнасшăн пулнă. Анчах ялта çын шутĕнче шутланман кĕтӳç. Анфис çинчен шутланă пулсан та, унпа пĕрлешсе илемлĕ пурнăç тăвасса шанма пултарайман. Мĕншĕн тесен Анфис пек хитре хĕршĕн Карачăмсăрах ялта ятлă çынсем пулнă.

Карачăм чылай вăхăт хушши выртнă. Вăл хутран-ситрен, йывăр кăмăла сирсе ярас шутпа, шăна кĕпçинчен тунă шăхличине калană. Пĕтĕм ăшран, чун патĕнчен тухакан кĕвĕсене калана вăл. Унăн кĕввине никам та итлемен. Никам та унăн чунне лăплантаракан пулман. Унăн ăшĕ тăвăрланса килнĕ. Чунĕ кӳтнĕ, чăтма çук хытă ыратнă. Вара вăл ним тума аптранипе пуçне симĕс курăк ăшне чикнĕ те хутланса выртнă. Çапла вăл нумай выртнă-и, сахал-и; сасартăк Анфисăн çинçе те уççăн илĕртекен юрри вăрмана янтратса янă. Карачăма ку сасă темшĕн тĕлĕкри пек туйăннă. Карачăм сывлама чарăнсах итленĕ. Пăртакран юрă шăпах чарăннă. Кайăксем чĕвĕлтетни кăна хăлхара пĕр пек илемлĕн илтĕнсе тăнă. Карачăм татах Анфисăн юррине кĕтнĕ. Сас-хура урăх пулман. Унтан сасартăк Анфисăн хăрушă сасси илтĕннĕ. Ку сасă Карачăм чĕрине темле çивчĕ япала пек касса кĕнĕ. Вăл çавăнтах сиксе тăнă та сасă еннелле чупнă. Питренкуçран туратсем çапнă, Карачăм ăна туйман...

Карачăм халь çаксене аса илсе, çӳллĕ кĕрт урлă ашса каçрĕ те, тăвати çул çурă ĕлĕкрех сасă илтĕннĕ еннелле шĕшкĕ тĕммисем хушшипе утрĕ. Ак вăл пĕр пĕчĕкçĕ уçланка пырса тухрĕ. Уçланкă йĕри-тавра пас тытнă йывăççем усăнса лараççĕ.

Тăватă çул çурă ĕлĕкрех Карачăм çак уçланкăна çиçĕм пек хăвăрт пырса çитнĕ. Уçланкăра чĕркуççи таран симĕс курăк ешĕрсе ларнă. Пĕр енче пĕчĕкçĕ чĕрес ӳпĕннĕ те, таптаннă симĕс курăк çийĕнче хĕп-хĕрлĕ хурăн çырлисем сапаланса выртнă. Çӳллĕ шĕшкĕ тĕми айĕнче ялти çĕрме пуян Мăн Трапхи ывăлĕ Энтип Анфисăн çăварне пуç тутрипе хуплама хăтланса тăнă... Карачăм Энтипе пур ăшран капланса килнĕ çилĕпе ярса тытнă та аяккалла çапса ывăтнă. Энтипе вăл урăх курса та юлайман. Карачăм умне, вăрăм çивĕтсене арпаштарса, çырла пек хитре сăн-пуçлă Анфис пырса тăнă. Унăн хурлăхлă кăвак куçĕсенчен, ахах пĕрчийĕсем пек, куççуль тумланă. Карачăм Анфиса çупăрласа илнĕ, унăн арпашăнса кайнă сарă та хулăм çӳçĕсене хăйĕн тĕреклĕ аллисемпе пĕрчĕн-пĕрчĕн майлаштарнă. Вăл Анфисăн чунне лăплантарас шутпа темле ырă та ăшă сăмахсем каласшăн пулнă, анчах кирлĕ сăмахсем тупăнман...

Çакăн хыççăн Карачăмпа Анфис пĕр-пĕрне пысăк та вĕри юратупа юратма пуçланă. Вĕсем ун чухне, пурнăçĕсем йывăр пулнă пулсан та, чи телейлĕ çамрăксем пулнă. Анчах, çукăн çĕрĕ хытă тенĕ пек, вĕсен телейĕ нумая пырайман. Çав çулхинех, ыраш вырнă вăхăтра, Карачăма кĕтÿ кĕтнĕ çĕртенех тĕнче вăрçине илсе кайнă. Çакăн хыççăн Карачăмăн пурнăçĕнче йăлтах урăх кунçулсем пуçланнă.

Ак халь Карачăмăн куçĕ умне фронтри кунсем тухса тăраççĕ. Карачăм хăй те тĕлĕнет: вăл окопсем урлă сахал мар чупса иртнĕ. анчах, юриех тенĕ пек, ăна пĕр пуля та тивмен. „Мĕнрен килнĕ-ши вăл?—хăйĕнчен хăй ыйтать.—Хăраманранах пуль", тет çавăнтах.

Унăн пуçне тепĕр сăнлăх пырса тухать. Вăл сăнлăха Карачăм ниепле те манаймасть. Ак халь те, унтанпа тăватă çул ытла иртнĕ пулсан та, вĕсем Карачăм умĕнче чĕррĕнех курăнса тăраççĕ.

Вĕсен полкĕ фронтăн малти линийĕнче пĕр ялта вырнаçнă. Чылай офицерсем кунĕн-çĕрĕн ĕçнĕ, юрланă, темле майрасемпе çуйăхнă. Çав хушăрах чăн чăн офицерсем те пулнă. Вĕсем салтаксемпе тăшмана хирĕç хастаррăн вăрçнă. Пĕрре çапла, кăвак шуçăм килнĕ чухне, нимĕçсем хытах хĕсĕрлеме пуçланă.

Умра пысăк хăрушлăх тănă. Анчах офицерсем пурте пĕр пек пулманран, кĕтÿçсĕр кĕтÿ пек, часах полкри йĕркелĕх пăсăлса кайнă. Салтаксенчен чылайăшĕ пĕр çырма тăрăх Россия еннелле шалалла тарнă. Çав самантрах хăйсен пуçĕсене шеллемен салтаксем нисçта каймасăр тăшманпа çапăçнă. Вĕсем хушшинче Карачăм та пулнă... Вĕсене тăшманăн пысăк вăйĕ часах хупăрласа илнĕ.

Карачăм çаксене аса илчĕ те, унăн пуçне çĕнĕрен çĕнĕ шухăшсем, çĕнĕрен çĕнĕ сăнлăхсем пырса тухрĕç. Вăл сăнлăхсемпе шухăшсем Карачăма канлĕх памарĕç, кăмăлне хускатрĕç. Чăнах та, мĕншĕн-ха, камшăн-ха вăл вăрçнă? Çĕршывшăн, турăшăн, патшашăн-и? Вăл çĕршыв Карачăмшăн куççуль те ахлату çĕршывĕ кăна пулнă.

Уçланкăра шăнса кайичченех тăчĕ Карачăм. Унăн умĕнчен темиçе çулсем хушши асран тухма пĕлмен Анфис халь те кайма пĕлмерĕ. Вăл тăватă çул ытла ĕлĕкрех çак уçланкăра Анфиса ыталанине, унăн арпашса кайнă сарă çÿçĕсене пĕрчĕн-пĕрчĕн майлаштарнине аса илчĕ. Халь вăл Анфиса тем пек ырă та ăшă, пысăк ĕмĕтсемпе çунан шухăшĕсене каласа парĕччĕ. Ăçта-ши, мĕн тăвать-ши халь Анфис?

Йывăр пулчĕ Карачăма текех çак уçланкăра пĕччен тăма. Вăл тарăн юра ашса, тăван ялнелле васкарĕ.

Карачăм вăрман сăмсакне тухрĕ. Ак каллех, паçăрхи пекех, ун умне вĕçĕ-хĕррисĕр тăсăлса выртакан шурă юрпа витĕннĕ уй-хир, йăмраллă Кушлавăш, шупкарах тĕтĕм юписем тухса тăчĕç...

Карачăм çуралса ÿснĕ тăван ялне таврăнать. Кас тĕттĕмĕ çĕр çине ÿкнĕ тĕле çырма урлă каçса, Енчĕк урамне хăпарчĕ. Анатран хăпарсанах, вĕрлĕк алăк уçăлчĕ те, Карачăм умне пĕчĕкрех те хыткантарах кĕлеткеллĕ, хура сухаллă Кăрпиттан старик тухса тăчĕ. Вăл палламан çын çине тинкererex пăхрĕ, унтан тĕлĕнсе кайса, икĕ аллине шартах çапрĕ.

— Карачăм, ывăлăм, эсĕ мар и?—ыйтрĕ вăл, пĕтĕм хаваслăхпа тулса.

— Эпĕ пулатăп-ха, Кăрпиттан пичче,—хирĕç таврăнчĕ Карачăм.

— Эх, Карачăм, Карачăм, эпир сана тахçанах çухатнăччĕ, киле таврăнасса пачах кĕтменччĕ,—терĕ Кăрпиттан, Карачăм аллине хыттăн чăмăртаса.—Ну, халь аçу-аннÿне пысăк телеех кÿретĕн ĕнтĕ...

— Кÿресчĕ-ха, Кăрпиттан пичче, кÿресчĕ,—çĕкленнĕ кăмăлпа хирĕç таврăнчĕ Карачăм.

Вĕсем, калаçкаласа, Карачăмсен килне çитрĕç, хура та лутра пÿрте кĕчĕç. Карачăмăн ватă амăшĕ хура кăмака умĕнче апат чÿлмекне çуса тăрать. Кăрпиттан маларах иртрĕ те:

— Крахвине тăхлачă, эпĕ сан пата инçе çула каякан çынна илсе килтĕм, хваттер ямăн-ши?—тесе ыйтрĕ.

— Ма ярас мар, пӳртĕнче çавах пĕчченех пурăнатăп вĕт,—терĕ Карачăм амăшĕ, унтан палламан çын çине тинкеререх пăхрĕ те, аллинчи чӳлмекĕ урайне персе анчĕ.—Карачăм, ывăлăм, эсĕ мар-и?!.

— Эпĕ, анне, эпĕ...—терĕ те Карачăм, амăшне ыталаса илчĕ.

Амăшĕ Карачăма ытала-ытала илсе чуптурĕ, куççулĕсем витĕр ывăлĕ çине ытараймасăр пăхса тăчĕ.

— Эх, Карачăм, Карачăм... Мĕн чухлĕ куççуль юхтартăм. Таврăнасса кĕтменччĕ... Тавах çӳлти аслă турра, сана тăван йăвуна, ватă аçу-аннӳ патне тавăрса килнĕшĕн...—Карачăм амăшĕ татах ĕсĕклесех макăрчĕ.

— Анне, çитĕ ĕнтĕ макăрса,—терĕ Карачăм, амăшне хăй çумнерех çупăрласа.—Халь килте ĕнтĕ. Малашне пĕрле пурăнăпăр... Атте ăçта?..

— Çак кунсенче таврăнмалла-ха вăл... Тырă тупаймăп-и, терĕ, Хусана кайнăччĕ.

Карачăм хăйсем патне пухăннă çынсем хушшинче Анфис пуласса кĕтрĕ. Анчах Анфис курăнмарĕ. Тата, юриех тенĕ пек, ун çинчен сăмах та хускатмарĕç. Çурçĕр иртсен, çынсем саланма тытăнчĕç. Юлашкинчен пӳрте Кара-

чăмпа унăн ватă амăшĕ кăна тăрса юлчĕç. Карачăм амăшĕнчен Анфис çинчен ыйтса пĕлме шутларĕ, анчах темшĕн ырă мар пек туйăнчĕ.

Карачăм çывăрма выртрĕ, ыйăхĕ килмерĕ. Ун умĕнче çаплах Анфис тăчĕ.

Вăл урăх выртма пултараймарĕ, тăчĕ те сак çине ларчĕ, нумай çулсем хушши пуçран тухма пĕлмен Анфис çинчен амăшне каласа пачĕ. Анфис хĕрлисемпе тухса кайнине Карачăм тинех пĕлчĕ.

Ку хыпар Карачăма тата пысăкрах шухăша ячĕ. Вăл тул çутăличченех пĕрре те куç хупмарĕ. Халь унăн умĕнче иртнĕ кунсем татах пĕрин хыççăн тепри сăнланса килчĕç. Вăл ĕлĕкхипе хальхи вăхăта танлаштарчĕ. Халь ун умĕнче анлă çул. Карачăм çак ирĕклĕ çĕршывра кăна телейлĕ пурнăç пуласса курса тăчĕ. Ăна тума нумай вăй кирлине те лайăхах туйрĕ вăл.

„Кăнтăртан акăлчансем, Çĕпĕртен Колчак тапăнать“, тенине Карачăм çул çинчех илтнĕччĕ. Ак халь вĕсем Карачăмăн пулас телейне туртса илме килнĕ. Анфис халь Колчака хирĕç Урал таврашĕнче вăрçнă. Анчах мĕншĕнха, Анфис хĕр пуççăн Колчака хирĕç çапăçма кайнă пулсан, Карачăмăн килте лармалла?

Халь унăн пуçĕнче пĕр çирĕп шухăш кăна, вăл халех хĕрлисемпе çума-çумăн тăрса, тă-

ван çĕршыва тăшмансенчен тасатасси. Халь Карачăм хăй мĕншĕн тата камшăн вăрçассине те лайăх пĕлет.

Амăшĕ тĕпел кукринче кĕнчеле арласа ларать.

— Анне,—терĕ Карачăм, амăшĕн пĕркеленнĕ пичĕсем çине хĕрхенӳллĕн пăхса,—пĕр-ик çăкăрлăх кăвас хумăн-ши?

Амăшĕ Карачăм çине тĕлĕнсе пăхрĕ.

— Мĕн тума, ывăлăм?.. Çăкăр çурă пур-ха. Ырана çитет.

Карачăм хăйĕн шухăшне тăруках каламарĕ, амăшне хĕрхенчĕ. Анчах хăй шухăшне хирĕç кайма та пултараймарĕ.

— Ан ятла мана, анне,—терĕ вăл, хальхинче темшĕн амăшĕ çине пăхмасăр.—Эпĕ ыран тухса каятăп.

— Ăçта, ăçта каятăн, Карачăм?—хăраса ӳкрĕ амăшĕ сасартăк.

— Анне,—терĕ Карачăм,—пирĕн тăван çĕршыва, пирĕн пулас ырă пурнăçа пур енчен те тăшмансем хупăрласа илнĕ. Вĕсем каллех пирĕн ĕнсесем çине хăпарса ларасшăн. Çавăнпа çакă хĕрӳ вăхăтра эпĕ килте юлма пултараймастăп...

Карачăм амăшĕн аллинчи йĕке çĕре ӳкрĕ. Пуçне ывăлĕн чĕркуççийĕ çине хурса, ĕсĕклесе макăрма пуçларĕ.

— Ывăлăм, Карачăм, ăçтаваскатăн?.. Ма кăштах килте пурăнасшăн мар эсĕ? Эпĕ сана тăватă çул ытла кĕтрĕм. Хĕрхенсем ватă аннӳне, пурăн пăртак. Аçу таврăниччен те пулин пăртак пурăн...

Тепĕр кун ирхине те шурă юрпа витĕннĕ уй инçетлĕхĕнче виçĕ уралла хĕвел çĕкленчĕ. Ура айĕнчи юр пусмассерен нăтăртатса макăрать.

Пĕчĕк кутамкка çакнă Карачăм амăшĕпе урама тухрĕ.

— Ну, анне, каятăп. Вăхăчĕсем çавăн пек. Ватă карчăк сасартăк, ĕшенсе çитнĕ пек пулса, кил хапхинчен пырса тытрĕ.

— Каятăнах эппин?—терĕ вăл хуллен.— Аçу таврăниччен те кĕтмерĕн ĕнтĕ... Юрĕ ĕнтĕ, чипер кай... Эпĕ ватă, ывăлăм, текех сана курасси те пулаймасть пулĕ. Сисетĕп, нумаях юлмарĕ пурăнасси...

Карачăм ăшĕнче темĕскер татăлса аннă пек пулчĕ. Вăл пĕр вăхăт аптăраса тăчĕ. Унтан амăшне пырса ыталаса чуптурĕ те уялла утрĕ.

1940 ç.

## Унӑн тусӗ

Таня, яланхи пекех, паян та ӗҫрен саванӑҫлӑ таврӑнчӗ.

Буфет ҫинчи куҫкӗски умне пырса тӑчӗ. Сапаланса кайнӑ, кӑлкан пек хулӑм та сарӑрах ҫӳҫӗсене йӗркелесе кӑпӑшкалантарчӗ.

Унтан вӑл сасартӑках хаваслӑн:

— Эх, ҫыру килнӗ-ҫке!—терӗ тулли сасӑпа.

„...Чунӑм!—вулама пуҫларӗ Таня ҫырӑва,— сана красноармеецла пысӑк салам яратӑп! Таня, тен эсӗ мана манса та кайрӑн пулӗ, анчах манӑн шухӑш яланах сан ҫинче вара. Тепӗр чух, чунӑм Таня, пуҫа пырса кӗрекен шухӑшсене сирсе яма та тӑрӑшатӑп, анчах санӑн сӑну, тӑрӑ кӑвак куҫусем, кӑтра та хулӑм ҫӳҫӳсем, тӑп-тӑпӑл тытнӑ тутусем, калаҫупа куллу, юриех тенӗ пек, куҫӑмсем умне чӗррӗнех килсе тухаҫҫӗ. Вара шухӑша каятӑп: ма эпӗ художник мар-ши?—тетӗп. Художник пулнӑ пулсан, эпӗ санӑн сӑнна ҫавтери ҫутӑ сӑрсемпе пысӑк маҫтӑрлӑхпа хама валли асӑнмалӑх ӳкерсе, куллен курӑнмалли ҫӗре ҫакнӑ пулӑттӑм. Анчах эпӗ художник мар.

Эпĕ сверхсрочник-пограничник, Инçетри Хĕвелтухăç чиккисене сыхлакансенчен пĕри.

Чунăм Таня, кунсем, шыв юххи пек, пĕр сисĕнмесĕр иртеççĕ. Мĕн пек ырă çĕршывра пурăнатпăр эпир: кашни иртен кун пире çĕнĕрен çĕнĕ пĕлӳсем, çĕнĕрен çĕнĕ хаваслăхсем, çитĕнӳсем кӳрет. Ак илер паянхи кунах: вăл маншăн пур иртнĕ кунсенчен те хаваслăраххи. Паян ман патăма, госпитале, хамăр чаçри майор юлташ килчĕ. Вăл, палатăна кĕрсенех, мана, чун патĕнчи хĕре ыталанă пек, ыталаса илсе чуптурĕ. Манпа атте-аннерен илтмен ырă та ăшă, чĕре патне пыракан сăмахсемпе калаçрĕ. Чемоданне уçса, тумбочка тулли тĕрлĕ кучченеçсем кăларса хучĕ. Эпĕ тĕлĕнсех кайрăм.

— Юлташ майор, кам ун чухлĕ кучченеç парса ячĕ? Тата мĕн тума ун чухлĕ илсе килтĕр?—тесе тĕлĕнсе ыйтрăм.

Майор кăмăллăн кулса илчĕ.

— Ку кучченеçсене красноармеецсемпе командирсем парса ячĕç.

Эпĕ савăннипе хам та сиссе юлаймарăм:

— Эх, манмаççĕ иккен юлташсем! — тесе персе ятăм.

— Манассине калаçатăр-ха эсир... Вăт халь сирĕн çинчен хамăр часть кăна мар, пĕтĕм тăван çĕршыв калаçать. Кашни хаçат вулаканах сирĕн паттăрлăхăрпа тĕлĕнет.

— Ăнах-и?—ёненмесӗр сăмах хушрăм эпӗ.

— Чăн пулмасăр. Сире тата Хӗрлӗ ялав орденӗпе парнелеме те палăртнă...

Эпӗ кун пек хыпара илтсен, нихăçан хаваcланман пек хаваслантăм. Пӗтӗм çанçурăм çӗкленнӗ пек туйăнчӗ. Сурансем сисӗнми пулчӗç,—нимӗн те ыратмасть. Хамăн халех госпитальрен тухса хамăн чаçе каяс килчӗ...

— Часрах юсанăр. Вара каллех тăван çӗршыв шанса панă ӗçе тăвăр,—тесе хăварчӗ мана майор.

Чунăм Таня, эсӗ пӗлместӗн те пуль мӗнле майпа эпӗ госпитальре выртнине? Ĕçӗ çапла пулса иртрӗ.

Пӗррехинче эпир, виçӗ пограничник, чикке секрета кайрăмăр. Çитес çӗре çитсессӗн, виçсӗмӗр те тӗмӗсем хыçне пытанса выртрăмăр. Сивӗ çил шилесе вӗрет, çӗр çуммипе, пуш хирти хăйăр пек, юка вӗçтерет, сивӗ чӗпӗтечӗпӗте илет. Эпир тинкерсе пăхатпăр. Умра нимӗн те курăнмасть, ним сасă-чӳ те илтӗнмест.

Çапла пӗр сехет ытларах выртнă хыççăн ман çумри Ухадай хуллен йынăшса илчӗ, пилӗкри чӗнрен çыртса туртрӗ. Пурте: ку ахалех мар, терӗмӗр... Хамăр татах малалла тинкерсе пăхатпăр, нимӗн те курăнмарӗ. Анчах та Ухадай çав-çавах хăй ӗçне тăвать: вăл çаплах чӗнрен çыртса туртать. Пирӗн умра

мĕн те пулин пурах иккен. Хамăр тимлĕхе татах вăйлăлатса, таврана шăтараслах тинкерме пуçларăмăр... Çапла пĕр çур сехет манерлĕ иртрĕ, анчах нимех те асăрхаса илеймерĕмĕр... Кĕçех, пирĕнтен инçе те мар, шурă-хура кĕлеткесем тĕмĕ хыççăн тĕмĕ хыçне чупнисене асăрхаса илтĕмĕр. Вĕсем пирĕн çинеллех килеççĕ. Ытла та нумайăн!.. Шутласа шутне те тупма çук. Мĕн тăвас?..

— Тăрăр!.. Аллăрсене çĕклĕр!..—тесе виççĕн те хараăссăн кăшкăртăмăр. Анчах вĕсем эпир кăшкăрнине хăлхана та чикмерĕç. Вĕсем, ăраснах, тата васкавлăраххăн тĕмĕ хыççăн тĕмĕ хыçне пытанса, пирĕн еннелле çывхарма пуçларĕç. Вара эпир виççĕмĕр те пĕрин хыççăн теприне шĕкĕлчеме пуçларăмăр. Анчах... вĕсем эпир сахаллине туйса, урнă пекех пирĕн çине ыткăнчĕç. Вара эпĕ ручной пулемета вĕçерсе илтĕм.

— Тра-та-та-та! Тра-та-та...—шатăртатса саланчĕ пулемет сасси.

Чикке пăсакансенчен чылайăшĕ çĕрелле явăнса ӳкрĕç. Юлашкисем, чĕррĕн юлнисем, тĕмĕсем хыçĕсене выртса, пирĕн çине татти-сыпписĕр тăхлан çумăрĕ çутарма пуçларĕç. Пирĕн çийĕн пульăсем шăхăрса иртрĕç...

Çавăн чухне манăн икĕ юлташ та ĕмĕрлĕхех пуçĕсене хучĕç. Эпĕ пĕчченех тăрса юлтăм. Анчах вăл пĕр кĕске самантлăха кăна

пулчĕ: сулахай хулпуççи пĕçерсе кайрĕ, çавăнтах манăн умри юр юнпа хĕрелчĕ...

Анчах та эпĕ ним ыратни-мĕнне туймасăр, юлашки вăя хурса, пулемет çине диск хыççăн диск лартса, вĕсем çинелле вĕçĕмсĕрех петĕм. Вăрман пĕр вĕççĕр шăтăртатрĕ... Часах вăйăм пĕтсе çитрĕ. Пулемет аларан вĕçерĕнчĕ. „Эх!— терĕм курайманлăхпа тулнăскер, чун ыратнипе чăтаймасăр,—юлашки диска та персе пĕтерейменрĕм-çке"... терĕм. Вара, пур пек вăя пухса, татах пулемет курокĕнчен тытса туртрăм. Анчах усăсăр: дискри пульăсем манран инçех те мар кăпăшка юра сирпĕте-сирпĕте чăмрĕç... Унтан, нихăш енчен те çăлăнăç çуккине курса:—Пĕлетĕп, пуçăма пĕр усăсăр мар, тăван çĕршывшăн хуратăп,—терĕм те, татах пулемета ярса тытрăм, ăна çĕклеме вăйăм çитеймерĕ.

— Эх, мĕн пек ырă унта!..—тесе, юлашки хут тăван çĕршыв еннелле çаврăнса пăхрăм. Шăп çавăн чухне,—мĕн чухлĕ савăнăç, мĕн чухлĕ телей!—манран инçех те мар хамăр часть командирне Кадыкова, паян ман патăма килсе кайнă майор юлташа, курах кайрăм. Вăл—красноармеецсемпе. Вара эпĕ:

— Хăвăртрах!..—тесе ăша кайнă сасăпа калама кăна ĕлкĕртĕм. Урăх ним те астумастăп...

Мана çавăн чухнех госпитале ăсатнă. Кунта вара эпĕ тăна та кĕтĕм, куллен кунах са-

майланма та пуçларăм. Халь вăй кĕрсех пырать. Çитес кунсенче лайăххах юсанса тухатăп...

Чунăм Таня, иртен кунçулра тем пек хаваслă тата йывăр вăхăтсем пулсан та, эсĕ манăн пуçран çав-çавах тухма пĕлместĕн. Эсĕ яланах манпала. Çавăнпа та эпĕ санпала ырă ĕçшĕн таçта кайма та, тем тума та хатĕр, вутпа шыв витĕр тухма та хатĕр. Мĕншĕн тесен пире пĕр ĕçпе пĕр юрату çывхартса тăрать.

Анчах, чунăм Таня, иртнĕ çулла отпуска хамăр пĕрле ĕçлесе пураннă завода пырсассăн: каяр, Таня, Инçетри Хĕвелтухăçне, тăван çĕршыв чиккине сыхлама тесен, эсĕ чылай вăхăт шухăша кайса лартăн. Унтан: ўстерсе çитĕнтернĕ заводран уйрăлмашкăн йывăр, пит те йывăр, терĕн. Эсĕ манпала пымарăн. Анчах эпĕ лайăх пĕлетĕп: эпир иксĕмĕр те пĕр телейшĕн çунатпăр. Пирĕн пурнăç çулĕ пĕр йĕрпе кайма кирлĕ. Çавăнпа та, çĕнĕрен отпуска пырсан, сана хамран хăварас мар тетĕп. Çакă çыруран пысăк ĕмĕтсемпе çунса юлатăп. Эсĕ, чунăм Таня, мана ĕлĕкхи пекех хисеплетĕн пулсассăн, çак çырăва илсенех ответ çыр.

Санăн тусу—Валентин*.

Таня, çырăва вуласа тухсан, нихăçанхинчен те тарăн шухăша кайрĕ. Вăл пукан çинчен тăрса чўрече умне пычĕ, завод çинелле тин-

керсе пăхрĕ. Заводăн çӳллĕ трубисенчен тухакан тĕксĕм-кăвак тĕтĕм хура вăрман çийĕпе капланса явăнать.

Çак завод ĕнтĕ Танянa чернорабочинчен пуçласа пысăк квалификаци панă: халь вăл фрезеровщица, бригадир; завод ăна, амăшĕ ачине пăхнă пек, пăхса çитĕнтернĕ; завод ăна ырă пурнăç туса панă, хаваслăх кӳнĕ. Вăл çак завода юрататъ. Танянa унран уйрăлма пит те йывăр.

Анчах мĕн тăвас-ха? Танянa нихăçан туйса курман туйăмсем ытла та хумхантарса ячĕç. Вăл хăй те сисеймерĕ, унăн тулли те кĕрентерех пичĕ çийĕнчен, ахах пĕрчисем пек, куççулĕсем куса-куса анчĕç. Мĕншĕн-ха куççульсем юхаççĕ? Вĕт вăл хăйĕн тусне, Валентина, яланах чĕре патĕнче тытса усратчĕ. Паян вăл хăй Валентина хытах юратнине нихăçанхинчен те ытларах туйрĕ. Çавăнпа та унăн ăшĕнче чи ырă шухăшсем, чи ăшă сăмахсем çуралса—пӳртре хуллен янăраса илтĕнчĕç:

— Пăхатăп та: мĕн пек янкăр хĕвелтухăçĕнчи тӳпе! Анчах вăл янкăр тӳпене те хура пĕлĕтсем хупласа илес пулсан—эпĕ те вĕсене сирнĕ çĕрте кирлĕ пулма пултарăп. Валентин отпуска килсенех—унпа каятăп! Хăвăртрах кил, тусăм!..—терĕ Таня, хĕвелтухăçĕнчи тӳпене пĕрремĕш хут курнă пек, хĕпĕртесе.

1937 çул.

## Художник Ятман

Эпĕ Ленинградри Художество академинче вĕренекен студентран, Ятман юлташран, çак кунсенче пĕр хулăм çыру илтĕм.

„Хаклă юлташ Туканай,—тет вăл хăйĕн çырăвĕнче,—пĕр юлташ çырса пĕлтернĕ тăрăх, эсир редакцинче ĕçлетĕр иккен, тăтăшах калавсем пичетлетĕр пулас. Çавăнпа та ман сиртен пĕр пулăшу ыйтас кăмăл пур. Эпĕ икĕ çул Хĕрлĕ Çарта пултăм, çав вăхăтра дневник пекки те çырса пынăччĕ. Халь çак дневник сыпăкĕсенчен пĕрне сирĕн патăра ярса парас, терĕм. Вуласа тухăр. Кăмăлăра килсен—пичетлеме тăрăшăр“.

Эпĕ унăн дневникне вуласа тухрăм. Лайăх пек туйăнчĕ вăл мана. Вулакансемшĕн те усăллă пулĕ, тесе, эпĕ ăна авторĕ мĕнле çырнă—çаплипех пичете хатĕрлесе парас, терĕм.

1

Паян пирĕн чаçри красноармеец-художниксем ÿкернĕ картинăсен выставки уçăлмалла. Выставка уçăлнă çĕре çитес, тесе, эпĕ хамăр чаçри лагерь клубне васкарăм. Анчах

эп пырса ҫитнӗ тӗле выставка уҫӑлнӑ, ҫынсем пырса тулнӑ. Картинӑсем умӗнче ушкӑнӑн-ушкӑнӑн кӗпӗрленсе, красноармеецсемпе командирсем, политруксем, вӗсен арӑмӗсемпе ачи-пӑчисем тата шефа илнӗ колхозран килнӗ хӑнасем тӑраҫҫӗ. Пӗр кӗтесре ытлах та хӗрӳллӗн шавлани илтӗнсе кайрӗ. Эпӗ ҫаврӑнса пӑхрӑм та, шавлакансем... „Шуррисем ялта" ятлӑ картина умӗнче тӑнине куртӑм. „Ман картина умӗнче! Мӗнле-ши? Хурлаҫҫӗ-ши, ырлаҫҫӗ-ши?"—терӗм эпӗ ӑшра. Ҫавӑнтах эпӗ картина умӗнче тӑракан ҫынсем хыҫне пырса тӑтӑм. Курса тӑракансенчен пӗри, лутака та патмарскер, мӑн сухаллӑ колхозник, тӗреклӗ аллипе сулла-сулла илет.

— Пӑхатӑп та ку картина ҫине, шуррисем пуррине курмастӑп. Анчах та шуррисен хаяр ӗҫне пит те лайӑх куратӑп. Шухӑша лайӑх уҫса кӑтартнӑ. Ҫивчӗ картина,—тет.

Тепри, ҫамрӑк ача, хӗрлӗ галстук ҫыхнӑскер, сухаллӑ ҫын ҫине пӑхать те:

— Мучипе пӗчӗк ачине питӗ шел,—тет.

— Шел ҫав, питӗ шел,—тет сухаллӑ колхозник,—старикӗ, вилнӗ пулсан, паянхи пурнӑҫа курайман ӗнтӗ вӑл, анчах пӗчӗк ачи, пурӑнать пулсан, ҫын пулнӑ пуль ӗнтӗ...

Унччен те пулмарӗ, хамӑр ротӑри красноармеец Евдокимов ман еннелле пысӑк савӑнӑҫпа ҫаврӑнса тӑчӗ.

— Вăл картинăна çак юлташ ӳкернĕ, тен хăйĕн шухăш-кăмăлне каласа та парĕ,—терĕ вăл.

Колхозниксем пĕрин хыççăн тепри ман еннелле çаврăнса тăчĕç. Эпĕ пĕр вăхăт ним тума пĕлмесĕр тытăнса тăтăм, анчах вĕсен кăмăлне хуçас килмерĕ. Эпĕ килĕшрĕм.

Пăхатăп та хам картина çине, хама хам ĕненместĕп. Чăнах та, мĕнле çырма пултарнă-ха эп ăна?..

Ак ман умра пĕчĕкçĕ хура пӳртĕн ăшчикки. Каç. Ахаль каç мар вăл, кĕрхи тĕттĕм каç. Анчах, шăши куçĕ пек, пĕчĕк чӳрече витĕр, ытла аякрах та мар, ял çунни курăнать: пӳрте хĕрлĕрех çутă сăрхăнса кĕрет. Хаяр та хăрушă тĕс... Урайĕнче, тур кĕтесси патнерехре, кăвак сухаллă старик выртать. Вăл çара уранах, пуçне хăяккăн пăрахнă, ним туймасăр, хускалмасăр выртать. Ун умĕнче пĕр пилĕк-ултă çулхи арçын ача тăрать. Вăл пĕчĕк чăмăрĕпе куççульне шăлать, уçă алăк çине пăхать. Сăнран—вăл хурланнă пек те, çилленнĕ пек те, çав хушăрах такама кĕтнĕ пек те туйăнать. Ку ача хăйĕн юратнă амăшне е юратнă ашшĕне, е пиччĕшне кĕтет пулас. Вĕсенчен хăшне те пулин пăшаллă çынсем, хаяр та тискер çынсем илсе кайнă пулмалла. Çавăнпа макăрать вăл.

Эпĕ колхозниксемпе красноармеецсем умне тухрăм та хам картина ҫинчен калама пуҫларăм.

— Ку картинăна,—терĕм эпĕ,—хам куҫпа курнине, хам тӳссе ирттернине аса илсе ӳкертĕм. Вăл ĕҫ ҫапла пулнă...

Эп каланă ҫĕре ҫынсем пухăна пуҫларĕҫ. Халăх нумайăшне кура, кăштах хăюсăрланнă пек пултăм. Калама чарăнтăм, анчах вăл нумая пымарĕ, эпĕ хама хам ҫирĕплетсе, пуҫланă сăмаха малалла тăсрăм.

— Ун чухне эпĕ кукаҫисем патĕнче пурăнаттăм. Виҫҫĕнччĕ эпир: кукаҫи, эпĕ тата кукаҫин хĕрĕ—17 ҫулхи Марине аппа. Ҫиме ҫителĕксĕрччĕ, час-часах выҫăллă-тутăллă тенĕ пек пурăнкалаттăмăр... Анчах пĕрре, кĕркунне-ха вăл, кăвак шуҫăм килнĕ чухне (вăл вунсаккăрмĕш ҫулта, сентябрь уйăхĕн пуҫламĕшĕнче пулчĕ) пирĕн кĕтмен ҫĕртен тутлă ыйăхран вăранмалла пулчĕ... Виҫсĕмĕр те хамăр ҫине витĕннĕ ҫĕтĕк-ҫатăк тумтирсене сиркелесе тăтăмăр та, мĕн пулнине чухласа илмесĕр, чӳречерен урамалла пăхрăмăр.

Куҫăмăрсем умне Куршанкă урамĕнчи вут ҫутти курăнса кайрĕ. Унтан вăл пысăкланнăҫемĕн пысăкланса, пĕтĕм яла ҫутатрĕ. Хăрушă сутă!

— Пушар, пушар!.. Ай-уй!..—тенĕ сасăсем илтĕнсе кайрĕҫ. Хура мĕлкесем чупа-чупа

иртеҫҫӗ. Анчах шыв пичкиллӗ лавсем таҫта кайса пӗтнӗ. Пӗр лав та курӑнмасть.

Унччен те пулмарӗ, ҫурансем, юланутсем, тачанкӑсем, тулли лавсем курӑнса кайрӗҫ. Вӗсем урам тӑрӑх тӑвалла хӑпараҫҫӗ.

Ҫапла, чӳречерен пӑхса тӑнӑ ҫӗре, пирӗн пата виҫӗ ҫар ҫынни пырса кӗчӗҫ. Пӗри яка, шукӑль тумланнӑ: хулпуҫҫийӗсем ҫиййӗнче пакунсем, шинелӗ тӑрӑх икӗ рет ҫутӑ тӳмесем анаҫҫӗ. Ҫавӑ ӗнтӗ, пӳрте кӗнӗ-кӗменех, наганне кӑларчӗ те кукаҫине тӗллерӗ.

— Сан патӑнта коммунист пур, терӗҫ. Ӑҫта вӑл? Тупса панӑ пултӑр!—кӑшкӑрчӗ вӑл хаяр сасӑпа.

Эпӗ, хӑранипе, куҫӑмсене чарса пӑрахрӑм та офицер ҫине тинкерсе пӑхрӑм. Лайӑххах куртӑм: унӑн вӑрӑм та сарлака сӑмси вӗҫӗ калаҫнӑҫемӗн темӗнле усӑна-усӑна илнӗ пек туйӑнать, вут пек ҫунакан хура куҫӗсем айӗнче, сылтӑм енче—ҫӗвӗк...

— Мӗн коммунисӗ пур ман патра?.. Никам та ҫук. Пурӗ те ҫаксем анчах пурӑнатпӑр: кӗҫӗн хӗр те, тата тӑлӑха юлнӑ ача, хӗрӗн ачи...—терӗ кукаҫи, хӑраса ӳксе. Хӑй чӗтӗресе тӑрать, сӑмахӗсене аран-аран ҫавӑркаласа калать.

— Суятӑн! Пур. Акӑ вӑл!—кӑшкӑрса тӑкрӗ офицер, Марине аппа ҫине аллине тӗллесе.— Илсе тухӑр ӑна!

Çавăнтах икĕ шурă салтак Марине аппа патне ыткăнчĕç.

Мĕскĕн Марине аппа çăлăнăç шыраса манран ярса тытрĕ, анчах уншăн эпĕ çирĕп хӳтлĕх пулаймарăм: пире пĕр-пĕринчен часах уйăрчĕç.

Кукаçи хăйĕн пĕртен-пĕр хĕрĕ хутне кĕрсе хĕрхенӳ ыйтрĕ.

— Шеллĕрсемĕр... Ан тивсемĕр ачана... Ан хăварсамăр тăлăха ватлăхра...

Çук, вĕсем кукаçин чĕре патĕнчен тухакан йăлăну сăмахĕсене итлемерĕç. Вĕсем, тискер кайăк чунлăскерсем, ак халех тытса хыпас пек, Марине аппана сĕтĕрсе, çухăртса илсе кайрĕç... Вара кукаçи, пысăк курайманлăхпа, юлашки вăй-халĕпе кăшкăрчĕ:

— Эх, чун иллисем!.. Ăçта сирте этем сăнпичĕ? Ăçта сирте этем чунĕ?..

Çавăнтах пĕр салтакĕ каялла çаврăнса кĕчĕ, кукаçи умне хаяррăн пырса тăчĕ.

— Мĕн кăшкăран, ватсупнă?—карланкине хырса кăшкăрчĕ вăл.

— Кăшкăрмастăп, ăшран тухакан сăмаха кăна калатăп: хăçан илĕ сирĕн хура чунăра тамăк хуранĕ?—пĕр хăрамасăр хастаррăн каларĕ кукаçи. Вăл татах темскер каласшăнччĕ пулас, анчах калас сăмаха калама ĕлкĕреймерĕ... Салтак, çиллине шăнараймасăр, винтовкине йăтрĕ те прикладпала çапрĕ. Кукаçи çавăнтах

суланса кайса ӳкрĕ. Вара вăл, сывлăш ҫавăрса илеймесĕрех, вилсе карĕ.

Ҫав ирхине Марине аппа киле таврăнмарĕ. Тул ҫутăлчĕ. Йăлтăртатса хĕвел тухрĕ. Ял шуррисенчен тасалчĕ. Хĕрлĕ ялавсем вĕҫтерсе хĕрлисем пырса кĕчĕҫ... Ҫавăн чухне тин Марине аппана тупрăм... Ăна сарайĕнче ҫакса хăварнă пулнă...

Эпĕ „Шуррисем ялта" ятлă картинăна мĕнле туйăмсемпе ӳкернине каласа пĕтертĕм. Анчах мана хупăрласа илнĕ ҫынсем, ним чĕнмесĕр, ҫăварĕсене шыв сыпнă пек, картина ҫине пăхса тăраҫҫĕ. Шăна вĕҫсе иртни те илтĕнет. Ку шăплăх татах тарăн шухăша ярать.

2

Паян ҫанталăк ĕнерхи пек мар. Ирхине тĕтреллĕ тăчĕ. Унтан вăл сирĕлсе кайрĕ. Ҫанталăк уяртрĕ. Анчах халь, кăнтăрла иртеспе, тем амакĕ пулчĕ тата, хĕвеланăҫ енчен хулăм кăвак пĕлĕтсем хăпарма пуҫларĕҫ. Вĕсем ҫӳлеллех кармашаҫҫĕ. Малти шупкарах пĕлĕтсем хĕвеле хупла-хупла иртсе каяҫҫĕ. Лăпкăн ларакан йывăҫсем тайкалансах шавла пуҫларĕҫ. Палаткăсем хушшипе хăйăр кăштăртатса вĕҫрĕ.

Ĕнер каҫ, проверкăра, мана вунă кунлăх отпуск панине пĕлтĕм. Паян ĕнтĕ ҫул ҫине

тухма хатĕрленсе те ҫитнĕ. Таса ҫи-пуҫ тă-хăнтăм, атăсене йăлкăшакан турăм, чемодана мĕн кирлисене чикрĕм. Юлташсемпе сывпул-лашса, ҫул ҫине тухмалли кăна юлчĕ. Анчах эпĕ халех каяймастăп-ха. Манăн документсем хатĕр мар. Штабран: кăнтăр иртсен тăватă сехетре тин пулать, тесе пĕлтерчĕҫ.

Тăхлан тĕслĕ пĕлĕт ҫўлелле хăпарсах пырать. Вăл хĕвеле хупласа та илчĕ. Ытла та лайăх! Сывлăш сулхăнланчĕ. Ăшăпа тарла-нă ҫанҫурăма кассăн-кассăн вĕрсе иртен ҫилĕ канлĕх парать.

Эпĕ дневальнăй патне пытăм. Ҫырусем пирки ыйтса пĕлтĕм. Анчах ҫырусем килмен-ха. Вара эпĕ палатка ҫумĕнчи тенкел ҫине ларса кĕтме пуҫларăм.

Ман умра хĕрлĕ хăйăрпа сапса тухнă сук-мак. Сукмакпа юнашарах эпĕ ятарласа тунă клумбăсем тăсăлаҫҫĕ. Кунти капăр ҫурăлакан чечексене те эпех илемлетсе лартса тухнă. Вĕсем халь чылай ўснĕ ĕнтĕ. Куҫăмсене— хĕрлĕ, кĕрен, сарă, шурă, кăвак чечексем илĕртеҫҫĕ.

Клумбăсем хушшинче—пирамида. Вăл— Чапаев памятникĕ. Ăна та эпĕ кăтартнă тă-рăхах тунă. А барельефне, хастарлă полково-дец Чапаев сăнне, калас пулать, пĕрремĕш хут алла гипс тытнă пулсан та, лайăх шă-ратса кăлартăм. Уншăн хĕпĕртерĕм. Унăн

сăнĕнчи хастарлăхне курса, хамăн та ун пекех хастар пулас килет...

Эпĕ нумаях та лармарăм.

— Юлташ Ятман, сире çыру пур!—кăшкăрчĕ рота писарĕ.

Эпĕ писарь патне чупрăм. Çырăва илтĕм те ним тума пĕлместĕп. Йăлт хĕпĕртесе ўкрĕм. Чăнах та, мĕншĕн хĕпĕртес мар-ха? Вĕт ăна Шура, юратнă тус, пĕрле çывăх пурăннă çын çырать!..

Темшĕн çав, юлташсенчен, уйрăмăнах çывăх çынран çыру илсен, яланах чун хĕпĕртет. Çитменни те çитнĕн, çукки те пуррăн туйăнать. Пĕтĕм çанçурăм çĕкленсе каять, вăйхăват пырса кĕрет.

Эпĕ конверта çуртăм та кукăр-макăр çырнă çырăва вулама тытăнтăм. Анчах нимĕн те ăнланаймарăм.

Татах вуласа тухрăм. Шура нихăçан та каламаннине çырса пĕлтерет. Ак мĕн çырать вăл: „Макçăм, ман ĕçсем ăнсах пыраççĕ. Нормăна кулленех виçшерçĕр процент тултаракан пултăм. Анчах, Макçăм, ман сана тахçанах каламалли пĕр сăмах пурччĕ, ăна темиçе хутчен, сăмах чĕлхе вĕçне çитсен те, калаймарăм. Эсĕ уншăн мана каçар. Малалла та пĕрлех пурăнатпăр пулсан, сан ăна çавах пĕлмелле. Ман атте-аннесене ссылкăна янă“.

Çырăва татах тепĕр хут вуласа тухрăм. Юлашки йĕркесем мана сасартăках çилентерсе ячĕç. Ним тума та пĕлместĕп. Тумтир те, палатка ăшĕ те тăвăр. Эх, мĕнле-ха вăл, çак таранччен пĕрле, пĕр-пĕрне юратса пурăннăскер, суйнă?!. Мĕнле питпе вăл мана суйса пурăннă?.. Çук, суеçĕ нихăçан та çывăх юлташ, пурнăç юлташĕ пулма пултараймасть... Манăн никам та çук...

Тулта вăйлăн аслати авăтса илчĕ, çумăр чашлаттарса çума пуçларĕ. Çанçурăм теме сиснĕн çӳçенсе чĕтĕресе илчĕ. Пит-куçăма алăсемпе хупласа, ним тума аптăранă енне, пуçăма çытар çине хутăм...

Мĕн тăвас-ши ку отпуск пирки? Каясах-ши?..

3

Кĕçĕн командир „Дегтярев" пулемет çинчен вĕрентсе, хамăр отделенинче заняти ирттерет. Акă вăл ыйту хыççăн ыйту парать. Унтан кала-кала ăнлантарать. Çав хушăрах култарса та илет. Заняти хаваслăрах, интереслĕрах ирттĕр, тет пулмалла. Эпĕ, отпускра пулин те, чуна пусарас тесе вĕсемпе пĕрлех ларатăп.

Анчах командир сăмахĕсем ман хăлхана кĕресшĕн мар. Эпĕ пуçа усса, пысăк хуйхă пусса илнĕ пек, тарăн шухăша кайса ларатăп. Иртнисене аса илсе, таçта аташса çӳретĕп...

Шура, ҫав Шурах пуҫран тухма пĕлмест. Ҫавах канăҫ памасть мана... Шурăпа малтанхи хут паллашнисем умăма пырса тухаҫҫĕ.

... Ун чухне эпĕ Горькинчи Автостройра ĕҫлеттĕм. Пĕррехине эпĕ ĕҫрен таврăнатăп. Ҫул ҫинче пĕр баракра тăрук кăшкăрашнисене илтрĕм. Унтан пĕр ҫинҫе сасă, хĕрарăм ҫухăрашнă сасă чĕрене касса кайрĕ. Унччен те пулмарĕ,—икĕ ҫамрăк, ҫĕтĕкрех тумланнăскерсем, пĕр хĕрачана, ҫулран пăхсан, пĕр вунҫичĕ ҫулхискерне, баракран тĕксе кăларса ячĕҫ. Хăйсем иккĕшĕ те вилĕ ӳсĕр.

Вĕсем хĕре усал сăмахсем каласа ахăлтатса кулчĕҫ те, „Сормовская" текен юрă юрласа, тайкалана-тайкалана барака кĕрсе кайреҫ.

Йӳнĕрех ситцăран ырăсла кĕпе туса тăхăннă хĕр барак ҫумне ларса ĕсĕклесе макăрчĕ. Хăй пĕрмай шурă тутăр кĕтессипе куҫĕсене шăла-шăла илет.

Хĕрачана баракран тĕксе кăларса яракансене манăн тулласа тăкас килсе кайрĕ.

Хама тӳлеккĕн тытса, тахҫанхи ҫывăх тус ҫумне пырса ларнă пек, эпĕ хĕрача ҫумне пырса лартăм.

— Калăр-ха, хĕрĕм, мĕн пулнă сире? Мĕншĕн макăратăр? Кам кӳрентерчĕ?—тесе, сассăма ҫемҫетерех ыйтрăм.

Вăл, хирĕҫ таврса калас вырăнне, тата хытăрах ĕсĕклесех макăрма пуҫларĕ. Вăл ча-

сах лăпланас çуккине туйса, эпĕ хăюлланса ун çумнерех куçса лартăм. Мĕнле те пулин унăн кăмăлне çемçетес тесе, тĕрлĕ май шутларăм. Унтан хамăн известкăпа, цементпа куштăркана аллăмпа унăн пĕчĕкçĕ те пиçĕ аллине хуллен тытса чăмăртарăм.

Вара вăл пуçне çĕклерĕ те ман çине пăхрĕ. Куççуль витĕр пăхакан хĕр иккĕленнине, кăштах шикленнине эпĕ лайăхах туйрăм.

— Эх, эсир ытла та хӳхĕм-çке!—терĕм эпĕ.

Ку сăмахсем мĕнле тухса кайнине хам та сиссе юлаймарăм. Чăнахах та, вăл ытла та илемлĕ. Тарăн çăлкуçĕ пек йăлкăшаççĕ унăн çĕмĕрт куçĕсем, хура чĕкеç çунаттисем пек илемлĕ куçхаршийĕсем! Ытарайман çав эп, ытарайман! Çавăнпа персе янă ĕнтĕ чĕлхе вĕçне килнĕ сăмахăма.

Хĕр вăтаннă пек пулчĕ те пуçне аяккалла çавăрчĕ. Пит-куçне тутăр кĕтессипе хупларĕ. Вăл, хуçăлнă кăмăлласкер, хăйне хисеплекенсем пуррине туйса пулас, лăпланчĕ.

— Çаплах вăтанма кирлĕ мар ĕнтĕ. Çаврăнса ларăр, мĕн пулчĕ сире?—татах сассăма йăвашлантарса ыйтрăм эпĕ.

Вара вăл, иккĕленсе пулин те, çаврăнса ларчĕ.

— Ĕçсе супнă та аташаççĕ. Тата укçа кивçен ыйтса тăнран ячĕç,—терĕ вăл чĕтĕрекен сассипе.

— Кун пеккисем сирĕн час-часах пулаççĕ-и?

— Хутра-ситре çеç. Укçа илнĕ хыççăн. Ахаль, урă чух лайăх,—терĕ хĕр, барак еннелле çаврăнса пăхса,—унта кам та пулин итлесе тăмасть-ши, тесе пулас...

— Камсем вĕсем? Пиччĕрсем-и?—чылай каласса ларнă хыççăн ыйтрăм эпĕ.

Хĕр кăшт хуйхăрса илчĕ те тутăр вĕççĕпе куççĕсене шăлса типĕтрĕ.

— Çук, пиччесем мар... Вĕсемпе пĕр бригадăра ĕçлетĕп... А эпĕ кунта, уй варринчи пĕччен йывăç пекех, тăлăх-турат. Ман никам та çук. Эпĕ вунă çултах тăлăха тăрса юлнă... Эпĕ ăна ĕнентĕм. Эпĕ ăна хĕрхентĕм. Вара ман ăна хамăр пата коммунăна илсе каяс килчĕ.

— Йăмăк,—терĕм эпĕ, унăн тарăн куççĕсенчен пăхса,—эпĕ сана тăвана юратнă пек юратап... Анчах, пăхсах курăнать, ырă çынсем мар сан юлташусем. Эпĕ сана ырă сунса калатăп, те итлĕн эсĕ мана, кам пĕлет, тен ĕненмĕн те...

— Мĕн каласшăн вара эсир?—вĕтеленсе ўкрĕ хĕр.

Эпĕ ăна поселокри йăлапа производство коммуни çинчен каласа кăтартрăм. Хĕр хĕпĕртесех итлерĕ. Вара эпир коммунăна кайрăмăр.

Унта çитсен, коммунарсем тĕлĕнсех кайрĕç.

— Пăхăр-ха, Ятман хĕр туянса килчĕ,— терĕç пурте кула-кула.

Эпĕ те вĕсене кулăпах тавăртăм.

— Ара, лайăх пурăннă чух пĕччен пурăнни килĕшӳсĕр, çавăнпа та туянтăм,—терĕм. Хĕре коммунăпа паллаштартăмăр, вара ăна çав каçхинех коммуна членне илтĕмĕр. Кун хыççăн кун иртрĕ. Пĕрле ĕçлерĕмĕр, пĕрле вылярăмăр. Эпир пĕр-пĕринпе туслашса кайрăмăр. Пĕр-пĕрне юратрăмăр. Тата хамăра та коммунарсем юрататчĕç, мĕншĕн тесен эпир ĕçланах ĕçре хамăра лайăх кăтартаттăмăр. Премисем те илкеленĕ.

Анчах мĕн пулса тăчĕ-ха Шурăпа? Мĕн пулчĕ?.. Нимĕн те ăнланма çук...

4

Виçĕ сехетре мана капитан хăй патне чĕнтерчĕ. Лайăх çын, кăмăллă çын пирĕн капитан. Ун пек çынпа çывăх пулма пит те лайăх пулмалла мĕн... Ăна курсан, чĕререн калаçас килет.

Кĕрсенех, вăл мана ларма сĕнчĕ. Пирус туртса ятăмăр. Калаçнăран калаçса кайрăмăр. Вăл ман пурнăç çинчен пĕлесшĕн пулчĕ. Эпĕ ăна хамăн пурнăç çинчен каласа патăм. Вăл мана тĕлĕнсе итлерĕ. Юлашкинчен вăл ура çине тăчĕ те, хăйĕн юратнă ачине ачашланă пек, мана çурăмран лăпкаса илчĕ.

— Апла эппин... Эпир иксĕмĕр те вĕлтрен ҫинчи ачасен хурлăхне курса ҫитĕннĕ... Анчах вăл иртнĕ ĕнтĕ. Халь эпир большевиксем. Пире хисеплеҫҫĕ. Пире парти ҫын турĕ. Пирĕн ĕҫлемелле, тăшмансемпе кĕрешмелле.

— Тĕрĕс,—терĕм эпĕ.

— Анчах...—вăл самант тытăнса тăчĕ. Чӳречерен пăхрĕ. Хура пĕлĕтсем катаналла иртсе кайрĕҫ. Хĕвел шевлисем сип-симĕс тумпа пĕркеннĕ йывăҫсем ҫинче каллех йăлкăшса вылярĕҫ. Пĕр кана пăхса тăнă хыҫҫăн, капитан ман еннелле ҫаврăнчĕ, ăшă кăмăллăн пăхса, малалла калама пуҫларĕ.—Эпĕ сирĕн пурнăҫăра паянхи кунччен лайăхах пĕлмен пулсан та чухланă, эсир ротăри чи лайăх красноармеецсенчен пĕри. Эсирех тата пирĕн ăста художник. Сире вунă кунлăха отпуск памалла турăмăр. Анчах, эпĕ халь кăна илтрĕм-ха, эсир отпуска каясшăн мар пулас. Мĕншĕн каясшăн мар вара? Ҫавăнпа та эпĕ сире хам патăма чĕнтертĕм,—терĕ вăл, юлашки сăмахсене татах та йăвашрах каласа. Унтан вăл, эпĕ мĕн каласса итлеме хатĕрленсе пулас, ман ҫине кăмăллăн тинкерчĕ.

Эпĕ Шура ҫырăвĕ ҫинчен кĕскен каласа патăм.

Вара вăл ура ҫине тăчĕ те, аллине ман хулпуҫҫи ҫине юлташлăн хурса, ҫапла каларĕ:

— Эх, çав çамрăклăх!.. Пулкалать вăл çамрăк чухне ун пекки те. Паллах, ун пек йывăр самантсене пĕччен чăтса ирттерме çăмăлах мар. Кирлĕ мар шухăшсем те пуçа çавăрма пултараççĕ. Ун пек чухне кирек хăçан та аслисем кирлĕ ăс пама пултарассăн туйăнать.

— Вăл çапли-çаплах,— килĕшрĕм эпĕ капитанпа,— анчах эпĕ йăнăшрăм. Тата чĕре патĕнчи çын çинчен нихăçан та никама та калас мар тенĕччĕ. Паллах, ун пек тусан, ăшри лайăх туйăмсене çухатма пулĕ, тесе шутланăччĕ.

— Эсир калани вăл чăн та çапла ĕнтĕ. Çамрăк чухне эпĕ хам та çапла шухăшланă. Анчах... пурăнан ĕмĕрте мĕн-мĕн кăна илтместĕн, мĕн-мĕн кăна курмастăн?.. Тĕрлĕрен пулса иртме пултарать. Тен сирĕн тусăрпа та пурте пулма пултарнă. Анчах халь вăл сире хăйне хăй ĕçре, йышра кăтартнă хыççăн чĕре патĕнчи вăрттăн сăмахне каланă пуль? Апла туни лайăх ĕнтĕ вăл. Тен вăл чăнласах та сирĕн çывăх тусăр пулĕ? Пурнăç кăтартĕ. Çавăнпа та уншăнах отпуска каймасăр ан тăрăр. Кайăр. Вăхăта лайăхрах ирттерме тăрăшăр. Эпĕ пĕр вăхăт шухăшланă хыççăн капитанпа килĕшрĕм.

— Каятăп,—терĕм çемçелнĕ кăмăлпа.

Тепĕр сехетрен мана хамăр чаçри шофер çăмăл автомашинăпа станцине ăсатса ячĕ.

## 5

Эпĕ трамвайран антăм. Ман умра пысăк хула. Тăватшар хутлă çĕнĕ çуртсем йĕркелленсе ларaççĕ. Сарлака урамсенче клумбăсем, статуйăсем, фонтансем, йĕркерен лартса тухнă çамрăк йывăççем. Урамсем тăрăх автомашинăсем пĕр вĕççĕр чупаççĕ. Сывлăшра аэропласем кĕрлесе иртеççĕ. Хам пекех çамрăксем шукăль тумланса тухнă, аллааллăн тытăнса, савăнăçлăн ирте-ирте каяççĕ. Çак хулара ĕнтĕ Шура пурăнать. Вăл çак хуларан инçех те мар автозаводра фрезеровщицăра ĕçлет... Илемлĕ хула. Хула илемне кура ман татах кăмăл çĕкленет, çунат хушса вĕçессĕм килет. Мĕншĕн эп композитор мар-ши? Композитор пулнă пулсан, çак чечеклĕ çĕршыв илемне нотăсем çине куçарнă пулăттăм, чи илемлĕ, чи çĕкленӳллĕ, чи хаваслă кĕвĕсем шăрантарăттăм! Анчах эпĕ композитор мар, эпĕ çамрăк художник кăна. Пулин ара! Эпĕ палитра çинчи сăрăмсене чун кӳртĕп, вĕсене хам пекех, чун-чĕре сисĕмĕсемпе сĕткенлĕп, тăван çĕршыв чапĕ çинчен хаваслă сăмах калаттарăп!

Çапла шухăшласа пынă хушăра эпĕ Шура пурăнакан çурт патне çитнине те сисмен. Тен иртсе те кайнă пулăттăм-и, анчах мана пĕр хаваслă сасă:—Максăм! тесе чĕнни чăрăнтарса тăратрĕ.

Эпĕ ҫаврăнса пăхрăм. Мĕн куратăп эпĕ! Хаваслă ҫамрăксем хушшинче ман юратнă Шура! Вăл чăлт шурă ҫи-пуҫ тăхăннă, унăн сăн-пичĕ савăнăҫлă. Чăтса тăраймарăм:—Шура!—тесе кăшкăрса ятăм та, аллăмсене малалла тăсса, ун патнелле чупрăм.

Вăл та мана хирĕҫ чупса пычĕ. Унăн анис улма пек сăн-пичĕ ҫинче хĕвел шевли вылять. Ҫирĕппĕн алăран чăмăртаса тытрĕ. Унтан, хыттăн ыталаса илчĕ те, ҫынсем умĕнчех чуптурĕ.

Эпĕ асăрхаман та, Шура юлташĕсем пирĕн ҫине савăнăҫлăн пăхса тăраççĕ иккен. Пит-куҫăмсем пĕҫерсе кайрĕҫ,—ытла та хытă вăтантăм. Анчах Шура ман вăтанăва часах сирсе ячĕ. Вăл юлташĕсем еннелле ҫаврăнчĕ те:—Паллашăр, манăн тус Макçăм Ятман!—терĕ.

Мана пурте алă пачĕç. Унтан сăмах хыççăн сăмах пуçларăмăр. Ҫапла эпир пурте виççĕмĕш хута, Шура пурăнакан хваттере, хăпартăмăр.

Эпĕ Шура хваттерне кĕрсен,—пысăк та таса пӳлĕме, тĕрлĕрен чечексене, ҫемҫе диванпа пукансене, урайĕнчи хитре коверне курсан—тĕлĕнсех кайрăм. „Ăҫтан пухма пултарнă вăл кун чухлĕ пурлăх?"—ыйтрăм эпĕ хамран хам. Ҫавăнтах тата, халь курнипе ҫыхăнмасăрах тенĕ пек, Шурăн ҫырăвĕ аса килчĕ.

Çамрăксем сĕтел йĕри-тавра лартса тухнă пукансем çине вырнаçса ларчĕç. Эпĕ вĕсен хушшине лартăм. Шура ман çумра, вăл патефонпа çĕнĕ юрăсем юрлаттарма пуçларĕ. Юрлатпăр эпир те. Вăштăр-вăштăр сулхăн çил пӳлĕме пырса кĕрет. Юрă аякка янăраса кайса çухалать. Кашнин сăн-питĕнче хаваслăх шевли йăлкăшать.

6

... Йĕри-тавра сĕм вăрман. Хура вăрман! Пĕр уçă çутă та çук, хĕвел çутти те курăнмасть. Çак вăрман витĕр ĕнтĕ эпĕ, çулсăрмĕнсĕр, хăм ăçта каясса пĕлмесĕр, утатăп. Ак ман умăма пĕр пысăк та сарлака юман хыçĕнчен хăмăр кашкăр сиксе тухрĕ. Вут куçĕсене çунтарса, ман çине хаяррăн пăхрĕ. Шăлĕсене шăтăртаттарчĕ. Çанçурăм сăрăлтатса кайрĕ. Чĕтĕрекен аллăма кăсъене чиксе, нагана кăларасшăн пикенетĕп. Анчах нагана кăларма та ĕлкĕреймерĕм, кашкăр урнă сасăпа ӳлесе пĕтĕм вăрмана янтăраттарса хумхантарчĕ. Унччен те пулмарĕ, кашкăрсем пĕрин хыççăн тепри ӳле-ӳле ман патăма çывхарма пуçларĕç. Ак вĕсем ман патăма çывхарсах пыраççĕ. Кăшкăрас—сас тухмасть, йывăç тăрне хăпарас—алă-ура итлемест. Халăм пĕтсе çитрĕ.

Вара ниçта та çăлăнăç çуккине кура:

— Шура, Шура! Сана кураймасăрах пĕтетĕп! — тесе ăша кайнă сасăпа кăшкăрса ятăм... Эпĕ вăрантăм. Куççене уçрăм. Ман умра чăлт шурă пурçăн çи-пуç тăхăннă Шура, шур акăш пек, хитреленсе тăрать.

— Макçăм, мĕн пулчĕ сана? Мĕн кăшкăртăн эс тĕлĕкре? — ыйтрĕ Шура, ман çине йăваш куçĕсемпе пăхса.

— Хăрушă тĕлĕк куртăм, — терĕм эпĕ, пуçăма çемçе минтер çинчен çĕклесе.

Вăл мана сăмах калама памарĕ, ыталаса илчĕ.

— Макçăм, манăн пĕчĕк Макçăм, мĕнех куртăн вара? — ыйтрĕ вăл.

Эпĕ ăна хам мĕнле тĕлĕк курнине каласа патăм.

— О, вăл нимех те мар. Акă чей ĕçĕпĕр те кинона кайăпăр, — терĕ вăл, — паян лайăх кино. „Вунвиççĕ“ ятлă кино. Каятпăр-и?

Вăл ман çине йăвашшăн та ыйтуллăн тинкерсе пăхрĕ.

— Каятпăр, — терĕм эпĕ.

Эпир кино курса ларатпăр. Шура ман аллăма чăмărта-чăмărта илет. Эпĕ те чăмăртатăп... Ытла та лайăх-çке юратнă хĕрпе, çывăх чунпа юнашар ларса кино курма!.. Вăт çапла яланах пур çĕрте те пĕрле пуласчĕ. Хаваслă самантсенче те, хуйхă-суйхă пулсан та пĕр-пĕринчен уйрăлас марччĕ, пурне те пĕрле чăтса ирттересчĕ!..

Кино пӗтсе пырать. Паттӑр красноармеец басмачсен пуҫлӑхне персе ӳкерет. Вӑл, вӑрӑмскер, хӑлаҫланса тӑсӑлса ӳкет...

Залӑра тӑвӑллӑн алӑ ҫупни илтӗнсе каять. Эпӗ те, паттӑр красноармеецӑн ӗҫне кура, чунтан хӗпӗртетӗп, хӗрсе кайсах алӑ супатӑп. Анчах ман Шура пӗр-пӗччен аллисене усса тӳрккессӗн ларать. Хӑй те сисеймерӗ пулас:— Ай!—тесе йывӑррӑн сывласа илчӗ.

— Шура, мӗн пулчӗ сана?—тетӗп эпӗ, ӑна хам ҫуммарах ҫупӑрласа.

— Ахалех... Вилесене курсан, ман чӗре ҫурӑлсах каять...—Шурӑн сасси, тем пусса илнӗ пек, йывӑррӑн тухрӗ.

— Мӗнле вилесене курсан?—ыйтрӑм эпӗ. Шура ман ыйтӑва хирӗҫ нимӗн те каламарӗ. Эпир киноран тухрӑмӑр. Каҫхи пейзажпа киленсе, курни-илтни ҫинчен калаҫса, Шура хваттерне утрӑмӑр.

## 7

Шурӑн хваттерне таврӑнсан, тӗлӗнсех кайрӑм. Ман умра лутака та сарлака, пӗр хӗрӗх пиллӗкри ҫын тӑра парать. Ҫийӗнче ун ҫар ҫи-пуҫӗ, уринче—хром атӑ. Вӑл таса тумланнӑ. Кӗрен петлицисем ҫинче пӗрер шпал: вӗсем вӑл капитан иккенне пӗлтереҫҫӗ... Мӗнле майпа, мӗн пирки вӑл Шура хваттерӗнче пулнине пӗлмен май, эпӗ Шура ҫине тӗлӗнсе пӑхрӑм.

Вара Шура икӗ рет чӑлт шурӑ шӑлӗсене кӑтартса кулчӗ те:—Макҫӑм, паллашӑр, ку ман пичче пулать,—терӗ.

Эпӗ Шура пиччӗшӗ патне пытӑм та честь патӑм.

— Здравствуйте, Макҫӑм Ятман!

— Федор Ирдемей,—терӗ те вӑл, ман алла чӑмӑртарӗ.

Эпир пӗр-пӗринпе паллашрӑмӑр. Сӑмах хыҫҫӑн сӑмах, шӑкӑлтатсах калаҫма пуҫларӑмӑр. Калаҫнӑ май вӑл мана хӑй Ленинградри Н-ски чаҫре ӗҫлени ҫинчен каласа пачӗ.

Шура ҫав хушӑра электро-кӑмака ҫинче пӗр ҫатма ҫӑмарта ӑшаласа, пирӗн умма пырса лартрӗ. Виҫҫӗмӗр те каҫхи апат ҫиме пуҫларӑмӑр.

Ирдемей хура куҫӗсемпе ман ҫине шӑтарса пӑхса илет те, хурҫӑ пек ҫивчӗ сӑмаххисемпе калаҫма пуҫлать. Эх, пулнӑ-ҫке этем, мӗн-мӗн кӑна пӗлмест, мӗн-мӗн кӑна курман вӑл? Эпӗ ун ҫине пӑхса тӗлӗнсе ларатӑп. Епле тӗл пултӑм-ха эп ӑна?.. Анчах мӗншӗн пӗлтермен мана Шура, мӗншӗн ку таранччен те каласа паман вӑл мана хӑй пиччӗшӗ ҫинчен? Мӗншӗн пытарса усранӑ?.. Тӗрлӗ шухӑш пырса кӗрет пуҫа. Эп иккӗленме пуҫлатӑп, пӗрре Шура ҫине, тепре ун пиччӗшӗ ҫине пӑхса илетӗп. Ҫав хушӑрах мана Шура янӑ юлашки ҫыру

аса килсе каять. Унӑн аппӗ-амӑшӗ кам пулнине аса илеп те каллех шухӑша путатӑп.

Ирдемей манран чаҫри ӗҫсем ҫинчен ыйтма пикенчӗ. Ку мана пушшех тӗлӗнтерчӗ. Командир, Хӗрлӗ Ҫар командирӗ, анчах красноармеецран вӑл мӗн ыйтать?

— Кирлӗ мар ыйтӑва хускататӑр, юлташ капитан,—терӗм эпӗ, Ирдемей ҫине тинкеререх пӑхса,—ун ҫинчен калама юраманнине хӑвӑрах пӗлме тивӗҫ эсир!

— Юрамасть?..—терӗ те вӑл, пуҫне хыҫалалла пӑрахса, каҫса кайсах кулма пуҫларӗ.

Асӑрхаса илтӗм эпӗ, Ирдемейӗн вӑрӑм та сарлака сӑмси калаҫнӑҫемӗн усӑна-усӑна илнӗ пек туйӑнать, вут пек ҫунан хура куҫӗ айӗнче, сылтӑм енче—ҫӗвӗ...

— Ах, ӑҫта-ха, ӑҫта курнӑ эпӗ ку сынна?—терӗм эпӗ хам ӑшра. Шухӑшсем хӑвӑрт-хӑвӑрт иртнӗ пурнӑҫӑма сӑнаса тухрӗҫ. Анчах хам ӑшри ыйтӑвӑма ниепле те ответ параймарӑм. Ҫак самантра Ирдемей ура ҫине тӑчӗ те, ман ҫине шӑтарас пек пӑхса, каллех кулса илчӗ.

— Юрамасть тетӗн?—ыйтрӗ вӑл.

— Юрамасть,—терӗм эпӗ ҫивӗччӗн, ун ҫине хаяррӑн пӑхса.—Пӗлӗш-тантӑша кӑна мар, чи ҫывӑх туса та калама юрамасть. Эсир ӑна хӑвӑрах лайӑх пӗлетӗр...

— Апла иккен... Шура патне çырса пĕлтерме юрать?—татах кулчĕ вăл.—Калаçатăр çав кирлĕ мара. Шура мана тĕпĕ-йĕррипех каласа пачĕ...

Эпĕ, ку сăмахсене илтсен, урсах кайрăм. Хăвăрт сиксе тăтăм та Ирдемей умне утса пытăм. Хаярран тинкерсе пăхрăм.

— Суятăр, куç умĕнчех суятăр!—тесе кăшкăрса ятăм.—Эпĕ нимĕн те çырса пĕлтермен!

Ирдемей Шура çине пăхрĕ те кулса илчĕ, эпĕ те пăхрăм, чăнах, Шура та кулса тăрать.

— Эх, Макçăм, Макçăм, пит те хăравçă иккен эсĕ,—терĕ Шура, ман аллăма ярса илсе.—Юри хăтланать вĕт вăл, санра сисĕмлĕх пуррине пĕлесшĕн... Мĕне кирлĕ ăна сирĕн чаçри ĕçсем çинчен пĕлни? Командир вĕт вăл. Мĕн усси?.. Эх, Макçăм, Макçăм, манăн пĕчĕк Макçăм...

Шура мана ыталаса илчĕ, Ирдемей умĕнчех, пĕр вăтанса тăмасăрах тутаран чуптурĕ.—Лар, Макçăм, çураçăпăр,—терĕ вăл йăваш сассипе.

Эпĕ лартăм. Анчах çав-çавах ман ăш вăркать. Эпĕ хама-хам ниепле те лăплантараймастăп.

— Тупнă шӳт тумалли...

— Маттур, пултаруллă красноармеец эсĕ,—терĕ Ирдемей, тачка аллине ман хулпуççи çине хурса,—яланах çавăн пек пулас пулать.

Эпĕ сире сăнаса пăхас терĕм... Пултарулла эсир.

## 8

Тул çутăлнă. Шура çук. Вăл ĕçе тухса кайнă. Вăхăт тăххăр çине сулăннă. Анчах, иртнĕ каç сахал çывăрнă пирки, ыйăх килет. Çавăнпа та вырăн çинчен тăрас килмерĕ. Эпĕ чылай вăхăт выртрăм... Ĕнер каç пуçа пырса кĕнĕ шухăш çаплах тухма пĕлмест: ăçта-ха курнă эпĕ ăна, ăçта?..

Алăка такам шаккарĕ. Залăра ура сассисем илтĕнчĕç. Такам кĕчĕ. Анчах кам? Пĕлеймерĕм. Спальня алăкĕ хупă пирки курма пулмарĕ. Çакна лайăх пĕлтĕм: уçса кĕртессе Ирдемей уçса кĕртрĕ.

Эпĕ шăпланса, çывăрнă пек пулса выртрăм.

— Курганов, миçе çул курман!—илтĕнчĕ хулăмрах ют сасă.

— Мĕнле Курганов?.. Эсир, юлташăм, йăнăшатăр пулас,—илтĕнчĕ Ирдемей сасси.

— Çук, Курганов, йăнăшмастăп. Мана ĕнер ĕлĕкхи тус курчĕ те, эсир кунта пурăнни çинчен пĕлтерчĕ.

— Мĕнле тус?

— Астумастăн-и?.. Астутарăп. 1918 çулта Хусана хĕрлисенчен туртса илсен, эпир Тĕрлемене шурăмăр. Эсир ун чухне офицерччĕ, эпĕ сирĕн денщикĕрччĕ.

— Çитет,—илтĕнчĕ Ирдемей сасси...

Урăх вĕсем сасăпа калаçмарĕç. Чылай ларчĕç, анчах эпĕ нимĕн те илтеймерĕм, юлашкинчен алăк сасси илтĕнчĕ,—палламан çын тухса кайрĕ пулмалла. Халь эп Ирдемей кам иккенне лайăххах астуса илтĕм.

Ирдемей, спальня алăкне хуллен уçса, ман патăма кĕчĕ.

— Эй, Макçăм, тăр, вăхăт тăхăр сехет!

Эпĕ куççене уçрăм та чышкăсемпе лутăркаса илтĕм.

— Ой-ой!.. Пит те нумай çывăртăм пулас эпĕ,—терĕм пуçăма йăтса.

— Тăр, ыйхă чăпти, тăр! Апат та сивĕнсе кайрĕ,—терĕ вăл, ман çирен çивиттине сирсе пăрахса.

— Халех...—Эпĕ сиксе тăтăм.

Анчах вăл, эпĕ душ айĕнче çăвăнса çи-пуç тăхăннă хушăра, таçта тухса кайнă. Пăхкаларăм—курăнмарĕ, чĕнтĕм—сасă памарĕ. Эпĕ диван çинче выртакан пилоткăна илтĕм те, апат çимесĕрех, пӳлĕме питĕрсе хăварса, НКВД-на васкарăм.

9

Каç. Тĕттĕм каç. Эпир Шурăпа калаçса ларатпăр. Манăн унăн шухăш-кăмăлне тĕплĕреххĕн пĕлес килет.

— Шура,—тетĕп эпĕ,—эпĕ сана чылай вăхăт пĕлетĕп ĕнтĕ. Анчах эс маншăн темле

ăнланмалла мар çын пек... Чунна уçса паман пек туйăнатăн. Вăрттăн шухăшна пытарса усратăн пек... Мĕншĕн-ха ун пек?.. Шура, манран мĕн пытарса усратăн?

Эпĕ Шура сăнне курас тесе, тинкерсе пăхатăп. Лайăхах куртăм унăн силуэтне: Шура, пуçне усса, тарăн шухăша кайса ларать. Çавăн пек вăл чылай вăхăт ларчĕ. Унтан, пуçне çĕклерĕ те, йывăррăн сывласа илчĕ.

— Макçăм,—терĕ вăл,—эпĕ сана курсанах юратрăм. Эсĕ маншăн пĕтĕм пурнăçчĕ, телейччĕ. Сансăр эпĕ тунсăхлаттăм, кичемччĕ. Ăшчик вăркама пуçлатчĕ. Эпĕ сана хытах юратнă çав. Халь те çавăн пекех юрататăп. Эсĕ маншăн çывăх тус. Анчах, каçар мана, Макçăм, çак тарана çитсе те эпĕ сана чĕре патĕнчи сăмахсене, тепĕр чух сăмах чĕлхе вĕçне пырсан та, уçса калаймастăмччĕ. Хăраттăм эпĕ... Хам кулак хĕрĕ иккенне каласа парсан, эсĕ манран сивĕнессĕн туйăнаттăнччĕ. Çухатас килместчĕ ман сана. Çавăнпа та малтан хама ĕçре кăтартас, терĕм, вара, эпĕ кулак хĕрĕ пулсан та, каçарăн, тесе шутлаттăм...

Унтан вăл мана ашшĕ-амăшĕсем кам пулнине, вĕсем мĕн туса пурăннине каласа пачĕ. Эпĕ тĕлĕнсе итлесе лартăм...

Юлашкинчен, Шура пуçне усрĕ те, вĕри куççулĕсем питçăмартийĕсем тăрăх юхса

анчёç. Эпё ăна ыталарăм та куççульпе йёпеннё пит-куçне хам пит çумне тытрăм. Таса сăмса тутрипе куççулёсене шăлатăп... Анчах вăл çав-çавах чарăнмасть.

— Шура,—тетёп эпё,—чарăн ёнтё...

Шура пуçне ман çине таять те, аллăма тытса пăчăрта-пăчăрта илет, хăйне лăплантарма тăрăшать.

— Эх, çав атте-аннесемшён мён чул куççуль юхтарма тиврё...

Эпир чылай лартăмăр. Шура лăпланнăçемён лăпланса пычё... Мана çаплах пёр шухăш канлёх памасть.

— Шура,—тетёп эпё.

Вăл ман çине тинкерсе пăхать.

— Мёнех каласшăн, Макçăм?

— Кам пулать вăл, Ирдемей?

— Ман пичче...—терё те Шура, пёр вăхăт çăварне шыв сыпнă пек, чёнмесёр ларчё.

— Юрё, сан пиччў, тейёпёр. Анчах ёлёк мён туса пурăннă вăл, халь мён туса пурăнать?

— Пёлместёп,—терё Шура, хăраса ўкнё сасăпа,—ыйтса пёлмен. Курасса та эпё ăна паянхипе тăваттăмёш кун кăна куратăп. Унччен нихăçан та курман... Хăвах пёлетён, уйрăмăн пурăннă эпир. Вăл çухалнăччё.

— Манран пытаратăн?—терём эпё, сассăма хăпартарах.

— Çук, Макçăм, çук, эпё санран нимён те

пытармастăп... Чăннипех калатăп: Ирдемей çинчен пĕр сăмах та пĕлместĕп...
— Пĕлместĕн эппин?—ыйтрăм эпĕ.
— Çук, пĕлместĕп,—терĕ вăл
Эпĕ çилĕ килнипе çумри пукана ярса илтĕм те Шурăна хăмсартăм:—Кала!..
— Ай... Пиччем, çăлсам!..—хăрушă сасăпа сухăрса ячĕ Шура.
Унччен те пулмарĕ, залăра ура сассисем илтĕнчĕç, лампăсем çутăлса кайрĕç. Ирдемей аялти кĕпе-йĕм вĕççĕнех, аллисене хыçалалла тытса, спальняна кĕрсе тăчĕ. Ман çине хура кусĕсемпе, шăтарас пек, хаяррăн тинкерсе пăхрĕ.
— Мĕн кирлĕ сана, кĕлмĕç?..—хаяр сасăпа кăшкăрса пăрахрĕ Ирдемей, ман патăма çывхарса пынă май.
— Эсĕ!.. Эсĕ мана кирлĕ, хаяр тăшман!
— Мĕн тума?..
— Пуриншĕн те... Ман аппана намăсласа çакса хăварнăшăн, кукаçие вĕлернĕшĕн... Шпион пулнăшăн!.. Эп сана палласа илтĕм, халь кăна палласа илтĕм!—кăшкăрса ятăм эпĕ чунтан тарăхса.
Ирдемей пĕрре шуралса, тепре кăвакарса кайрĕ. Пĕтĕм пĕвĕпе чĕтресе ӳкрĕ. Сылтăм аллине çĕклерĕ те:
— На... Эсĕ те ил! Кĕлмĕç ăраттине—кĕлмĕç вилĕмĕ!—терĕ те браунингне ман çинелле тĕллерĕ.

Эпĕ алăри пукана Ирдемей çине ывăтса ятăм. Браунинг сасси янăрарĕ. Кăкăра темскер пĕçертсе, чĕпĕтсе илчĕ. Эпĕ кровать çине тĕшĕрĕлсе ӳкрĕм...

Тăна кĕтĕм. Пăхатăп та, залăра НКВД сотрудникĕсем тăраççĕ.

Эпĕ вырăн çине вăйран çĕкленсе лартăм. Сулăна-сулăна каятăп. Ирдемей ман çине хаяр куçĕсемпе пăхать; Шура, йĕпеннĕ куçĕсене ман çине çĕклеме хăяймасăр, пуçне усса тăрать.

Унтан вĕсене НКВД сотрудникĕсем тухма хушрĕç. Ирдемей алăк патнелле утрĕ. Шура, чылай вăхăт ним тума аптăраса тăнă хыççăн, ман патăма сулăна-сулăна утса пычĕ.

— Йăлтах Ирдемей турĕ ăна... Макçăм, каçар... Пичче хутăштарчĕ.

Эпĕ пĕр вăхăт ним калама аптăраса лартăм. Унтан пĕтĕм халăмпа çĕкленсе:

— Çук, нихăçан та каçару пулас çук,—терĕм, ăшран аран-аран тухакан сăмахсене çавăрса.—Ултавшăн каçармаççĕ.

Куççем умĕнче симĕс-кăвакункăсем вĕлтĕртетрĕç, пӳлĕм ăшĕ кустăрма пулса çаврăнма пуçларĕ. Вăй пĕтсе çитрĕ. Эпĕ вырăн çине ӳкрĕм.

1937–38.

Цена 1 р.

А. МЕДВЕДЕВ

# ПО СЛЕДАМ ТОВАРИЩА

На чувашском языке

Госиздат ЧАССР
1941